# ПЕРЕМЕНКА

№ 9

ДЕКАБРЬ, 2022



ШКОЛЬНЫЕ СОБЫТИЯ

********************************

Вступление в ряды патриотов…………………………………………….....................2

Здравствуй, Новый 2023 год……………………………………………………………….3

Школьная газета основана
в феврале 2022 года
Основатели:
Ермошкина Раиса Николаевна
Сютова Кристина Васильевна

# ПЕРЕМЕНКА

## Çамрăк патриотсен йышĕ хушăнчĕ

Вĕренекенсен чунĕсенче патриотизм туйăмне чĕртсе вăратас ĕç Санарпуç вăтам шкулĕнче çулран çул вăй илсе аталанса пырать.

Раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнче 6-мĕш класра вĕренекен 19 ача çамрăк патриотсен йышне тăчĕ.

Мероприятие «Морское братство» обществăлла пĕрлешĕвĕн председателĕ Я.А. Никифоров, Вăрнар тата Йĕпреç районĕсен çар комиссариачĕн представителĕ Е.П. Голубцова, «Офицерсен союзĕн» председателĕ, запасра тăракан офицер Н.И. Васильев, афган вăрçин ветеранĕ В.Н. Ишмулин, педагогикăри ĕç ветеранĕсем, запасри офицерсем Б.И. Сергеевпа В.П. Кудряшов, Украинăра пыракан спецоперацие хутшăннă Н.А. Николаев тата Виталий Александровичпа Галина Димитриевна Никоновсем – Никонов Александр Витальевичăн ашшĕпе амăшĕ - хутшăнчĕç. А.В. Никонов – çар çынни, Раççей Федерацийĕн «Барс» ятпа çӳрекен 26-мĕш ятарлă отряд разведчикĕ, Украинăра пулса иртекен спецоперацие хутшăнса пуçне хунă. Çапăçура хăюлăх кăтартнăшăн Крап беретне тата Паттăрлăх орденне тивĕç пулнă.

Мероприятие шкул директорĕ В.И. Малов уçрĕ. Вăл çамрăк ăрăва Тăван çĕр-шыва юратма, йывăр вăхăтра уншăн кар! тăма чĕнсе каларĕ.

6-мĕш класс ачисем присяга пачĕç, таса чунлă, шанчăклă юлташ пулма, шкул чысне çӳллĕ шайра тытса пыма, аслă Раççейшăн, тăван Чăваш Еншĕн тӳр кăмăлпа ĕçлесе пурăнма, тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçса вилнĕ паттăрсен ятне яланах асра тытма, Раççейăн тивĕçлĕ гражданĕсем пулма тупа турĕç. А. Тимофеева командир А.Никоновăн ашшĕпе амăшĕнчен Галинăпа Виталий Никоновсенчен çамрăк патриотсен отрядне вĕсен паттăрла çапăçса вилнĕ ывăлĕн ятне пама ирĕк ыйтрĕ. Çамрăк патриотсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç.

Хаклă хăнасем А.В. Никонов паттăр разведчик ячĕпе хисепленсе тăракан отряда патриотсен йышне тăнă ятпа саламларĕç, вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыма, спортпа туслă пулма хушрĕç, ырлăх-сывлăх сунчĕç. Ашшĕ-амăшĕ ячĕпе 6-мĕш класс ачисене В.А. Большаков саламларĕ. 7-мĕш класра вĕренекен Смирнова Е. мероприятие хутшăнакансене «Встанем» юрра парнелерĕ.

Асăнмалăх-савăнмалăх сăн ӳкерчĕк турĕç.



# ПЕРЕМЕНКА

29 декабря в школе прошёл долгожданный **Новогодний праздник** для учащихся 1-11 классов. Новый год для детей – это пора сказок и чудес. В это время дети ждут прихода Деда Мороза, Снегурочки и, конечно же, подарков. Новогодний праздник – чудесный праздник, связанный с надеждами на лучшее в грядущем году, с ожиданием исполнения всех желаний. Ребята с огромной радостью встретили самых долгожданных гостей на празднике – Деда Мороза и Снегурочку, и были не только зрителями, но и участниками праздника: участвовали в конкурсах, пели, водили хоровод вокруг ёлки, веселились.



